Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

9 (7543) № ✻ Юн кун, 2008 çулхи февралĕн (нарăс) 6-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Республикăра

Тĕнче Кубокĕ тата Çĕнтерӳ кунĕ

Шупашкарта хăвăрт утас енĕпе Тĕнче кубокĕн ăмăртăвĕсем иртнĕ вăхăтра Çĕнтерӳ кунне халалланă уяв мероприятийĕсем те пулĕç. Республика пуçлăхĕ унта спорт делегацийĕсен представителĕсем те йышлă хутшăнассине пĕлтернĕ. Çавна май Сергей Гапликов премьер-министра уяв программине пуянрах тума хушусем панă.

Çав вăхăтрах Чăваш Ен тĕп хулинче салютсен тата фейерверксен виçĕ кунлăх фестивальне ирттерме палăртнă. Кунашкал фестиваль Шупашкарта пĕрремĕш хут иртĕ. Николай Федоров палăртнă тăрăх, вăл пĕрмаях пуласси питĕ пĕлтерĕшлĕ: «Çак проект чăваш çĕрĕ çине тата нумай-нумай туриста илĕртĕ».

Налуксем ытларах пуçтарнă

2008 çулăн пĕрремĕш уйăхĕ финанс тĕлĕшĕнчен ыррине шантарать. Федерацин налук службин Чăваш Республикинчи управленийĕн ертӳçи Аркадий Дергачев малтанхи кăтартусем тăрăх кăрлачра пур шайри бюджетра тата бюджет тулашĕнчи фондсенче 2 миллиард та 671 миллион тенкĕ пухăннине пĕлтернĕ. Çав шутра республика бюджетне 563,36 миллион тенкĕ кĕнĕ. Çакă палăртнин 108,7 проценчĕ, иртнĕ çулхи кăрлач уйăхĕн шайĕнчен 39 процент нумайрах. Малтан шутланă пекех лайăх динамика палăрать, тенĕ Аркадий Дергачев.

Раççейре

Инфляцип кĕрешме

РФ правительстви юлашки çулсенче инфляцие парăнтараймасть. Иртнĕ çул вăл 8,5 процент пулать тесе шантарнăччĕ. Чăннипе 12 процентпа танлашрĕ. Ăна мĕнле чакармалла?

Экономика аталанăвĕн министерстви инфляцип кĕрешмелли план хатĕрлет. Ăна тепĕр уйăхран çирĕплетеççĕ.

Февральте экономика, ял хуçалăх министерствисен специалисчĕсем апат-çимĕç кăларакансемпе тата суту-илӳ сечĕн представителĕсемпе тĕл пулаççĕ. Тĕллевĕ – апат-çимĕç хакĕсем ӳсессине асăрхаттарасси.

Халĕ апат-çимĕç хакĕсемпе вĕсене кăларакансемпе сутакансем калаçса татăлнипе тытса тăраççĕ. Килĕшӳ май уйăхĕччен вăйра шуланать. Малашне вара ăна «Об основах государственного регулирования торговой деятельности» саккунпа йĕркелемелле тăвасшăн. Çак саккуна апрель уйăхне хатĕрлеççĕ.

Инфляцие нефть продукчĕсемпе стройматериалсем хаклани те хăвалать. Кунта хаксене биржăра сутă тунипе тата картельсене хĕстернипе чакарма шутлаççĕ.

Монополисен тарифĕсене те куçран вĕçертесшĕн мар.

Ĕçре маттурсем

Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан пикесем пирĕн пурăнмалли çуртсенчи хăтлăхшăн тăрăшнине ĕненетĕр-и? Эпĕ ĕненетĕп. Вĕсем кашниех районти «Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн ертсе пыракан компанийĕнче» ĕçлеççĕ, хăйсене шаннă тивĕçе ответлăха туйса пурнăçлаççĕ. Компанире паянхи куна пĕтĕмпе 75 пин тăваткал метрлăх нумай хваттерлĕ 145 çурт. Вĕсене тытса тăрасси тата коммуналлă услугăсене çителĕклĕ те вăхăтра парса çитересси вĕсем епле ĕçленинчен те нумай килет. Çакна Ф. Григорьева тĕп бухгалтер, С. Федорова тĕп специалист, Е. Ершова юрист, А. Мясникова кассир (сăн ӳкерчĕкре сулахайран сылтăмалла) лайăх ăнланаççĕ.

А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.

Çĕр ыйтăвĕсемпе

Ялсен электрон карттине тăваççĕ

Пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен министрĕ Алла Стальская пĕлтернĕ тăрăх, 2008 çулхи нарăс уйăхĕн 4-мĕшĕнчен республикăри район-хулара вырăнти объектсем хирти условисенче ăçта вырнаçнине палăртмалли ĕçсем (вырăнти объектсене геодези хатĕрĕсемпе ӳкересси) пуçлаççĕ. Çак ĕçсене Чăваш Республикин районсенчи ялсен электрон карттине тăвас тĕллевпе конкурсра çĕнтернĕ ятарлă организаци – «Меридиан плюс» аэрогеодези наукăпа производство предприятийĕ тулли мар яваплă общество (Мускав хули) пурнăçлĕ.

Иртнĕ çул республикăра сывлăшра ӳкерӳ ĕçĕсем ирттернĕ. Çавна май муниципалитет пĕрлĕхĕсен ортофотопланне хатĕрлеме май килнĕ. Халĕ çак материалăн электрон версине хатĕрлеççĕ.

Электрон карттисемпе çĕр мониторингне тытса пырас, ял хуçалăхĕнче усă куракан çĕрсен территори çĕр йĕркелĕвне хатĕрлес ĕçре патшалăх влаçĕн тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем усă курĕç. Унашкал карттăсем пур шайри администраци пайланăвĕн объекчĕсене, урамсене, ял-хуласене кĕрекен çулсене, муниципалитетсен район территорийĕсенчи автоçул тытăмĕсене, рельеф объекчĕсене, гидрографи тата гидротехника сооруженийĕсене, промышленноç тата инженери, социаллă инфратытăмăн тата чукун çул тытăмĕн объекчĕсене кăтартакан тĕп материал пулса тăраççĕ.

Алла Стальская çӳлерех асăннă ĕçсене вăхăтра тата пахалăхлă пурнăçлас тесен «Меридиан плюс» аэрогеодези наукăпа производство предприятийĕн представителĕсене вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен кирлĕ пулăшупа тивĕçтермелле тенĕ.

ЧР ПА пресс-служби.

Района йĕркеленине халалласа

Ĕçре малтисене чыслаççĕ

Çулсеренех Шупашкарта районти ĕç коллективĕсен тата Муркашсен ентешлĕхĕн представителĕсен савăнăçлă пухăвне ирттересси ырă йăлана кĕнĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕн кăçалхи январĕн 23-мĕшĕнчи 45-мĕш номерлĕ йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн район йĕркеленинне халалласа ирттерекен уяв çитес шăмат кун, февралĕн 9-мĕшĕнче иртет. Район кунне халалланă куна хатĕрленсе ирттерме 16 çынран тăракан йĕркелӳ комитетне туса хунă. Ăна район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов ертсе пырать. Уява хатĕрленсе ирттермелли мероприятисен планне çирĕплетнĕ.

К.Иванов ячĕллĕ Чăваш Патшалăх академи драма театрĕнче иртекен савăнăçлă пухура районăн 2007 çулхи социаллă-экономика аталанăвне пĕтĕмлетеççĕ, 2008 çулхи задачăсене палăртаççĕ. Район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов доклад тăвать. Ĕç коллективĕсем, ентешлĕх представителĕсем, савăн пекех хăнасем район ĕçĕ-хĕлĕпе видеофильмпа слайдсенчен те паллашĕç. Театрта вырнаçтарнă стендсенчен те предприятисемпе организацисен, ял тăрăхĕсен пурнăçĕ яр уççăн курăнĕ.

Уявра çĕнтерӳçĕ-коллективсене, кашни отрасльте малта пыракансене чысласçĕ. Çак кун районăн Хисеп кĕнекине çĕнĕ хушаматсем çырăнĕç.

Иртнĕ çул Ача çулталăкĕ пулчĕ. Халĕ вара Çемье тата Ырă ĕçсен çулĕ пырать. Уявра çак самантсем те тĕп вырăнта пулаççĕ. Ача çулталăкĕнче ирттернĕ ыр кăмăллăх марафонне хастар хутшăннисене, районти шкулсенчи ертсе пыракан тата попечительсен канашĕсен хастар ертӳçисене, иртнĕ çулта пысăк ӳсĕмсем тунă ачасен ашшĕ-амăшĕсемпе педагогĕсене чысласçĕ. «2007 çулхи чи лайăх çемье» конкурсра çĕнтернĕ, çавăн пекех вăрăм ĕмĕрлĕ çемьесемпе, ĕç династийĕсемпе, ачана çемьене пурăнма илнĕ, ашшĕ-амăшĕн хӳтлĕхĕсĕр тăрса юлнă ачасене опекăна илнĕ çемьесемпе сцена çинче тĕл пулни те ĕмĕр асра юлĕ, чунра ыр туйăмлăх чĕртĕ, çав туйăма вăйлатĕ.

Мĕнле уяв вăл тата юрă-ташăсăр? Районти художество пултарулăх, ачасен коллективĕсем, профессиллĕ артистсем концертпа савăнтарĕç. Ку çеç те мар. Кăçал Муркашсен Шупашкарти ентешлĕхĕ те хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарма хатĕрленет. Кăçалхи уяв тепĕр çĕнĕлĕхпе те асра юлĕ. Район тата ентешлĕх командисем хушшинче иртерекен турнир волейболла камсем ăстараххине кăтартса парĕ.

Муркашсен çак кун уяв иккенне хулара пурăнакансем те туйĕç. Шупашкарти пасарсенче çак кун ял хуçалăх продукцийĕпе халăх промыслин таварĕсен ярмăркки ирттерме палăртнă. Районти ал ăстисем пултарулăхĕпе вара уявра та паллашма пулать. Кунтах ачасем ăсталанă хатĕрсен кураве те ĕçлĕ. Муркашпа Мăн Çĕнтĕр райповĕсем мĕнлерех çăкăр-булка кăларнипе уявра паллашма çеç мар, туянма та пулать. Буфетсем те ĕçлеççĕ. Кĕскен, уяв кăçал та уявлах иртĕ. Вăл хаваслă лару-тăрура 11 сехетре уçăлать (унччен кунта куравсемпе паллашма ĕлкĕретĕр), 15 сехет тĕлне вĕçленет.

Л. ПАВЛОВА.

РАЙОНТА: ĕнер, паян, ыран

Кашни яла çул пулать

Паянхи куна районти 177 ялтан 34-шĕ патне хăпартнă çул çук. Республика ертӳçин автомобиль çулĕсем тăвассине хăвăртлатасси çинчен указне пурнăçласа пĕлтĕр 23 ял патне 26,4 километр чухлĕ çĕнĕ çулсем тума палăртнă. Иртнĕ çул вара 16,015 километр çул хывнă, пĕтĕмпе 119,775 пин тенкĕлĕх. Аслă çулсемпе 15 яла çыхăнтарнă.

Вырăнти çулсене 6,9 километр юсанă, 19250 пин тенкĕлĕх. Республика пĕлтерĕшлĕ çулсене – 4,5 километр, 24678 пин тенкĕлĕх. Çулсене пăхса тăма 10572 пин тенкĕлĕх тăкакланă.

Кăçал 19 ял патне хăпартнă çул тума палăртнă. 23,5 километр çул тумалла пулать. 41,6 километр çула юсаса çĕнетеççĕ.

Пĕрлехи пухусене хатĕрленеççĕ

Ял хуçалăх предприятийĕсем кооператив членĕсен пĕрлехи пухăвĕсене хатĕрленеççĕ. Ял сыннисен сӳтсе явмалли ыйтусем сахал мар.

Çулталăкри ĕç итогĕсене пăхса тухса хакламалла. Çĕнĕ технологисене вăя кĕртесси пирки те татăклă утăмсем тумалла. Çитес çул валли производствăпа финанс планĕсем çирĕплетмелле.

Февраль уйăхĕнче пухусене «Герой», «Передовик», «Сеятель» хуçалăхсенче ирттерме палăртнă.

Пирĕн какая ыттисем те кĕтеççĕ

Ял хуçалăх пайĕ пĕлтернĕ тăрăх, январь уйăхĕнче патшалăх ветеринари учрежденийĕсем 54 выльăх тушкине экспертиза тунă. Çапла вара 31,2 тонна какай сутма ирĕк хучĕ панă.

Иртнĕ уйăхра ГИБДД сотрудникĕсем ял хуçалăх продукцине ытти регионсене илсе тухнине тĕрĕслеме икĕ рейд ирттернĕ. 8 автомашина тĕрĕсленĕ. Ветеринари документчĕсемсĕр выльăх-чĕрлĕх продукцине илсе тухнине палăртман.

Ытларах мăшăрланнă

Кăçалхи январь уйăхĕнче районта 14 çамрăк çемье чăмăртаннă. Пĕлтĕр – 10 çемье кăна.

Уйрăлакансен хисепĕ вара икĕ хут чакнă. Кăçал 4 çемье арканнă пулсан, иртнĕ çул – 8 çемье.

Пĕтĕмпе январьте 28 ача (пĕлтĕр 31 ача) çуралнă. Çут тĕнчене 16 арçын ача, 12 хĕр ача килнĕ.

Пурнăçран уйрăлнисен хисепĕ иртнĕ çул та, кăçал та пĕрех: 50 çын.

А. ТИХОНОВ хатĕрленĕ.

Тĕл пулăва чĕнетпĕр

Музей уçăлать

Нарăсăн 15-мĕшĕ – Раççейри интернационалист-салтаксен аса илӳ кунĕ. Çĕршыв тулашĕнчи тĕрлĕ хĕрӳ точкăсенче пулнисем çак кун тăтăшах пĕрле пухăнаççĕ. Демократиллĕ Афганистан Республикинчи вăрçа хутшăннисен ку тĕлĕшпе пĕрлĕхлĕх туйăмĕ уйрăмах пысăккине эпир кашниех курсапĕлсе тăратпăр. Пытармăпăр, 18 çултах Тăван çĕршыври мирлĕ пурнăçра çĕршыв интересĕсене хӳтĕлесе çар операцийĕсене хутшăнакансене пĕртте çăмăл пулман, анчах вĕсем çĕршыв хушнине присягăпа килĕшӳллĕн пурнăçланă. Вĕсене пирĕн паян ырăпа çеç асăнмалла. Районти афганецсем çак кун çулленех Калайкассинчи вăтам шкулта пухăнасси ырă йăлара ĕнтĕ. Иртнĕ çул шкул директорĕ И. Осипова афганецсене çак вăрçă вут-çулăмĕн музейне уçма пӳлĕм уйăрса пама шантарнăччĕ. Вăхăт çитрĕ. Февралĕн 8-мĕшĕнче 11 сехетре Афганистанран пирĕн çарсене кăларнăранпа 19 çул çитнине тата Тăван çĕршыв хӳтĕлевçисен кунне халалласа Калайкассинчи вăтам шкулта асăннă музей уçăлать. Тепĕр кунне, февралĕн 9-мĕшĕнче, çак шкултах Афганистан вут-çулăмĕ витĕр тухнисен черетлĕ тĕл пулăвĕ пулать. Тĕл пулу умĕн афганецсем Москакассинче хăйсене халалласа лартнă палăк умĕнче 10 сехет çурăра тĕл пулса çав вăрçăра çухатнă хăйсен юлташĕсене асăнса чечек кăшăлĕ хурĕç.

Афганецсем, тĕл пулуран ан юлăр!

Юбилей

Саламлатпăр

Пирĕн хаклă çыннăмăр – Шомик ялĕнче пурăнакан **Семен Васильевич ИЛЬМЕНДЕЕВ** февралĕн 5-мĕшĕнче 70 çул тултарчĕ.

Çулсем иртеççĕ сисĕнми,
Кирлех-ши унăн кулянма?
Вăй-халăр пултăр иксĕлми,
100 çул сунатпăр пурăнма.

Саламлакаенĕсем: çемйи, тăванĕсем, юлташĕсем, пускилсем, ял-йыш.

Çырăнтару – 2008

Малтанхи хакпа çырăнăр

«Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата июнь уйăхĕнчен илсе тăма февральте малтанхи хакпа çырăнтараççĕ.

Ултă уйăха çырăнмалли хак – 169 тенкĕ те 62 пус.

Район хаçатне хакланиччен çырăнса илĕр!

РАЙХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ.